*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

5 (2417) №
Хакĕ ирĕклĕ
1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014, кăрлач, 24

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН | ЯЛ-ЙЫШ | КИЛ | ХŬТЛĔХ | СЫВЛĂХ | ТĔПЕЛ

ШУХĂШ

## Çĕртен те, ĕçрен те писмерĕмĕр-ши?

Çĕр – пирĕн пуянлăх. Çак каларăшпа эпир час-часах усă куратпăр. Пире çĕр тăрантарнăран, тумлантарнăран çапла каланă. Халĕ вăл малтанхи пĕлтерĕшне çухатса çĕр хапсăнчăкĕсен аларăшне кусса пырать. Хăшĕ-пĕри çĕр лаптăкĕсене сутса пуяс çул çине тăчĕ. Саккуна пăсакансем те пур. "Сутчăр-иç. Усăсăр выртать вĕт. Хыт-хура кашласа ларать çеç", – текенсем те пур. Ĕмĕрĕпе çĕре хисеплесе, ун çинче ырми-канми чакаланса пурнăça сыпăнтарса пынă халăх епле-ха çĕре ним выраннe хуми пулчĕ? Ара, тăшмансем килсе тапăнсан ăна хўтĕлеме халăх кар тăнă, пурнăçа шеллемесĕр çапăçнă. Халĕ вара тăван çĕре ют çынсене сутни те никама та пăшăрхантармасть. Мĕншĕн хамăра тăрантаракан, тумлантаракан çĕр ама çури вырăнне тăрса юлчĕ-ха?

Манăн шухăшăмпа – çакă юлашки çирĕм-çирĕм пилĕк çулта эпир ўссе пыракан ăрăва ĕçрен пистерсе пынипе çыхăннă.

Ас тăватăр пулĕ, ача ултă-çичĕ çула çитсенех алла кĕрепле-сенĕк, кĕреçе тытнă, çĕр улми кассине кăпкалатнă чух лаша çавăтса утнă... Эпир вунă-вун пĕр çулсенче уйра лашапа сўреленĕ, çурлапа тырă вырнă, çĕр улми пуçтарнă. Хĕлле, канмалли кунсенче, ял тăрăх кĕл, кайăк-кĕшĕк каяшĕ пухса çўренĕ...

Кĕркунне авăн уйăхĕнче шкултан таврăнсанах сумкăна пăрахнă та кăштКăшт çыртkаласа çĕр улми уйне чупнă, тĕттĕмленсе лариччен, паранкă курăнми пуличчен ĕçленĕ. Кунсерен çапла. Уй-хир ĕçĕсем вĕçлениччен. Каччă е хĕр шутне кĕриччен темĕнле ĕç тума та вĕренсе çитнĕ. Килтине те, пĕрлешўллĕ хуçалăхрине те.

Шкул та ўссе пыракан ăрăва ĕçе хăнăхтарнă. Кунта кĕркунне шкулĕпех иккшер эрне тăван колхоз уй-хирĕнче çĕр улми пуçтарни кăна мар, ĕç урокĕсенче шкул мастерскойĕнче сĕтел-пукан, шăнкăрч вĕлли ăсталама вĕренни те, кайрантарах "животноводство" тата "машиноведени" текен урoксенче фермăра ĕçлени те, тракторпа çўреме хăнăхни те, шкул пахчипе садĕнче улма-çырла туса илни те, çулсерен тимăр-тăмăр, кивĕ хут пухассипе хастарлă уйăхлăхсем ирттерни те кĕрет.

Иртнĕ ĕмĕрти 70-80-мĕш çулсенче Етĕрне районĕнчи Палтайри вăтам шкулта Чăваш АССР тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ Т.Т.Моисеев директор пуçарăвĕпе строительсене вĕрентсе кăларатчĕç. Каччăсемпе хĕрсем аттестатпа пĕрле каменщикпа малярштукатур дипломне илетчĕç. Аслă шкула вĕренме кĕрейменнисем алă усса ларман – ара, специальноç пур çынна пĕр сăмахсăрах ĕçе илетчĕç.

2-мĕш стр. ➔

КĔСКЕН

Пĕлтĕр республикăра 30 ытла выльăх-чĕрлĕх объекчĕ хута янă (2012 çулта – 27). Пĕтĕмĕшле илсен – ĕне фермисем. Ытларахăшне çемье фермине аталантармалли программăпа килĕшўллĕн çĕкленĕ. Ял хуçалăх министерствин кăтартăвĕсем тăрăх – вунă фермер хуçалăхне тăкака саплаштарма 62,7 млн тенкĕлĕх субсиди панă. Хайсен укçи-тенкипе тата кредит илсе ферма хута янисем те сахал мар.

Нарăс уйăхĕн 20-21-мĕшĕсенче Шупашкарти Николаев космонавт ураменчи суту-илўпе комплексĕнче регионсен хушшинчи «Çĕр улми – 2014» курав иртĕ. Унта чикĕ леш енче тата хамăр çĕр-шывра туса кăларнă вун-вун çĕр улми сорчĕпе паллашма, туянма май пулĕ.

Иртнĕ çул агропромышленноç комплексне аталантарма пирĕн республикăна 2456,2 млн тенкĕ уйăрнă, çав шутран федераци бюджетĕнчен – 1561,97 млн, Чăваш Ен хыснинчен – 894,23 млн тенкĕ.



**ПАЯН** кун тăршшĕ 8 сехет те 06 минут. Уйăх катăлать. Çак кун сивĕ пулсан шартлама кунсем малалла та тăсăлĕç. Ăшă тăрсан – çуркунне ир килĕ.

**ЫРАН** – Татьяна кунĕ. Сивĕ те уяр пулсан – ăшă та ырă çу кунĕсем пулĕç, ăшă та çил тăманлă тăк – тухăçсăр çу килессе.

**ВИÇМИНЕ** – Ермилин кунĕнче – кушака сăнанă. Вăл урайĕнче йăваланни – çанталăк ăшăтасса, çăмхаланса сăмсине пытарса выртни – сивĕтессе. Кушака вĕлерекен çичĕ çул телей курмасть тенĕ.

ЫЙТУ – ХУРАВ

## Çулталăкран уйăрмалла

**?** **Кĕркунне хурлăхан хунавне тымарланма çĕр ăшне чавса хăвартăм. Тĕмĕрен ăна хăçан уйăрмалла? Хăш-пĕр хурлăхана тата çăнăхла сывлăм сыранчĕ. Хими хатĕрĕсемсĕр хăтăлма май çук-ши унран?**

**Людмила ИВАНОВА. Элĕк районĕ.**

Авса чикнĕ хунава тымарланма çултапăк кирлĕ, çавăнпа ăна çитес кĕркунне тĕп тĕмрен уйăрса лартма юрать. Хурлăхан тĕмĕ çамрăк пулсан хунавне ун çумĕнче икĕ çул е яланлăх хăварма та юрать.

Çăнăхла сывлăм (мучнистая роса) ытти кăмпа чирĕ пекех çулталăкра икĕ хут – çуркуннепе çулла – сарăлать. Чире пуçараканĕ çамрăк хунавсенче хĕл каçать.

Çуркунне пуçламăшĕнче сиенленнĕ хунавăн кукăрлăнă вĕçĕсене пĕтĕмпех касмалла (çак ĕçе кĕркуннех туса хăварсан тата лайăхрах), иртнĕ çулхи çулçа пухса çунтармалла.

Чечеке ларнă хыççăн хурлăхан тĕмне кальци соди янă шывпа (10 л пусне – 20-25 г, лайăхрах çыпăçма 2 кашăк сахăр е 30 г супăнь хушмалла) е кĕл шывĕпе (вĕреме кĕнĕ 10 л шыва 3 кг кĕл ярса пĕр талăк тăрăлтарса лартмалла) пĕрĕхтермелле. 7-10 кун иртсен çакнах тепĕр хут тумалла.

Çу каçипе икĕ хут – чечеке лариччен тата çимĕçĕ чăмăртанма пуçласан – тĕме çакнашкал хутăшпа сирпĕтмелле: 10 л шывра 30 г мочевина, 7-8 г бор кислоти, 1 г хлорлă цинк, 0,5 г пăхăр сульфичĕ тата 0,3 г кали марганецĕ ирĕлтермелле. Çапла туни тĕме апатлантарнипе пĕрлех чирчĕртен хўтĕленме те пулăшĕ.

## Мĕн аксан лайăхрах-ши?

**?** **Çуркунне çĕр çырли ўснĕ çĕре хусăклас тетпĕр. Ун вырăнне мĕн акмалла лартма юрать-ши?**

**Елена ВАСИЛЬЕВА. Çĕрпў.**

Тархасшăн, тымар çимĕç ўстерĕр (кăшман, кишĕр, сельдерей, анчах çĕр улми мар), пăрçапа (пăрça, нимĕç пăрçи, шалча пăрçи) кавăн йышшисем (кавăн, хăяр, кабачок), çавăн пекех сухапа ыхра çитĕнтерме юрать.

КИРЛĔ ПУЛĔ

## Ал айĕнчипе

Пахчара колорадо нăррипе кĕрешнĕ чухне çеç химипе усă куратăп. Купăстана лайăх çитĕнтерессишĕн пĕр кĕтесре ятарласа эрĕм ўстеретĕп. Шурă лĕпĕш вĕçме пуçласанах купăста çине эрĕм татса хума пуçлатăп. Суханпа кишĕре яланах юнашар ўстеретĕп – вĕсем пĕр-пĕрне хўтĕлеççĕ. Лăймака хурта (слизень) вара çапла пухатăп: тарăн турилккене çур кĕленче таран сăра ярса йăран варрине лартатăп. Ирпе хайхисене пуçтарса кайăксене çиме лартса паратăп. Кориандр вара чăннипех мухтава тивĕçлĕ. Çуркунне унăн çулçи кирек епле салата та хайне евĕр тутă кĕртет. Пулса çитнĕ вăрри шăшисене хăратать. Типĕтнĕ туни çĕр улмипе ытти çимĕçе тĕрĕс-тĕкел упранма пулăшать. Калăпăр, çав шăшисенченех хўтĕлет.

**Лидия СЕМЕНОВА. Шупашкар.**

ЯЛ ПУРНĂÇĔ

## Те кашкăр, те йытă...

Тул çутăлма пуçласанах чăхсем валли ирхи апат хатĕрлерĕм. Мĕн-мĕн янине те каласа хăварам-ха. Кĕркунне ăшă пулнăччĕ. Çавăнпах хĕл касма нўхрепе хунă пан улми иртерех çĕрме пуçларĕ. Тислĕк купи çине пăрахма шел. Нумай шухăшласа çўренĕ хыççăн чăхсене çитерес терĕм. Малтан çур сехет пек пĕçеретĕп, кайран комбикормпа хутăштарса лартса паратăп. Такана тĕпне тĕпренчĕк те хăвармаççĕ вĕт.

Хайхи тутлă апатпа чăхсен вити еннелле утатăп. Çĕр каç çунă шурă юр çинче палламан йĕр курах кайрăм. Хальччен те курклананăччĕ-ха вĕсене – мунча, ампар, сарай тата ытти хуралтă алăкĕ патне çитсе каялла тухса кайнă тĕлĕнтермĕш йĕрсене. Урамран йытă тавраш кĕрес çук. Пахча хыçĕнчен, Колешша ялĕ енчен, шăтăк туса кĕрсен кăна. Паянхи йĕр хăйĕн пысăкăшĕпе тĕлĕнтерчĕ. Кашкăр мар-ши текен шухăш та вĕлтлетсе илчĕ пуçра. Йĕр вутă хумалли сарайне кĕрсе кайнă, анчах каялла тухни çук. Çавăнпа хăвăртрах сарай алăкне питĕрсе хутăм.

Кăшт вăхăт иртсен сарайĕнчен шăв-шав илтĕнме пуçларĕ. Хăма çурăкĕнчен пăхрăм: темле çăмламас чĕр чун курăнчĕ. Сунарçăсăр май килмест вĕт. Юлташ патне шăнкăравларăм. Касчен тăхтама хушрĕ хайхи.

Вутă сарайне асăрханса уçатпăр. Шăпăрт. Нимĕнле чун та çук. Юман алăка кăшланă йĕр çеç юлнă. Йытă пулнă-ши е кашкăр-ши?

Кăçал ялсенче хуçасăр йытăсем нумайланса кайрĕç. Уйрăмах вĕсем Лапсар еннелле кайнă çул çинче чылай. Тен, çакă юнашарах чăх-чĕп фабрики пулнипе çыхăннă? Тăтăшах çул çўрекен водительсем урапа е çынсем çине сиксе ларма хатĕр тăракан кĕрт йыттисене курнине каласçĕ. Маларах вĕсемпе сунарçăсем тытсах кĕрешетчĕç те...

**Николай ПЛАТОНОВ.**
**Шупашкар районĕ,**
**Шоркка ялĕ.**

| ÇАНТАЛĂК | Вăхăт | 24.01 | 25.01 | 26.01 | 27.01 | 28.01 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Шупашкарта | | | | | | |
| Температура, $^0C$ | 2-4 сехетре | –24 | –26 | –29 | –25 | –28 |
| | 14-16 сехетре | –17 | –20 | –23 | –18 | –21 |
| Юр çăвать | | – | – | – | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 759 | 758 | 760 | 760 | 766 |

СĔНŬ-КАНАШ

• Кролике пусиччен 10 кун маларах май пур таран ытларах çитерме тăрăшмалла. Тутлă шăршăллă курăк (укроп, петрушка, сельдерей), тĕрлĕ концентрат парсан вара ашĕ самай техĕмлĕрех пулĕ.

• Хур аçисемпе амисем туслă пурăнччăр тесен вĕсене уйрăммăн çитермелле. Вак утта тырă хывăхĕпе тата пĕçернĕ çĕр улмипе пăтратса парсан уйрăмах юратса çиеççĕ.

# Çĕртен те, ĕçрен те писмерĕмĕр-ши?

1-мĕш стр.

Кайрантарах вĕсенчен чылайăшĕ стройкăсенче мастăра е прораба тухатчĕ. Çакна та асăнса хăвармалла: Палтайри шкулăн çурчĕсене те (вĕренӳ корпусĕсем, спорт çурчĕ, столовăйпа интернат) ачасемпе вĕрентекенсен, шкулта ĕçлекенсен аллипе тунă. Вĕсенче халĕ те ачасем вĕренеççĕ. Çак майпах районти колхозсемпе совхозсенче, предприятисенче çамрăк строительсем вуншар çурт туса лартнă. Вĕсен шутĕнче фермăсем, лавккасем, клубсем тата ыт. те. Шкултан вĕренсе тухнисем тĕл пулусене килсен яланах мăнаçланса ĕçпе вĕренӳ тапхăрне ырăпа аса илеççĕ. Ара, шкул вĕсене пурнăç çулĕ çине çирĕппĕн ярса пусма çын туса кăларнă-çке... Тăван çĕре, ял хуçалăх ĕçне хисеплеме, юратма вĕрентнĕ. Çĕрпе пĕлсе ĕçлекен пулмасан кам тыр-пул туса илĕ? Çĕр хуçасăр, ама çури вырăнне юласси çемьерен, шкултан пуçланать мар-и?

Халĕ мĕн куратпăр-ха? Çемьере те, шкулта та вĕренсе тухакан çамрăксене хăвăртрах ялтан хулана тухса кайма хĕтĕртсе кăна тăраççĕ. Тĕрĕссипе, яла хăй кăмăлĕпе юлакан çамрăка çын вырăнне те хумаççĕ. Хулана ĕçе е вĕренме вырнаçнă йĕркеллĕ çамрăксенчен пĕри те яла каялла таврăнмасть. Хутран-ситрен кăна чирли е сусăрри, е ĕçке ерни таврăнкалать. Ваттисем вилсе пĕтсен пире тăрантаракан, тумлантаракан уй-хирте кам ĕçлĕ? Юрĕ, паянлăха (укçа пулсан) ют çĕр-шывсенчен темĕн те туянса килме пулĕ. Вĕсем пире укçалла тумлантарĕç те, тăрантарĕç те. Тӳнтерле самана сиксе тухсан, таварне укçалла та сутма пăрахсан, мĕнле пурăнăпăр? Уй-хирсем пĕтĕç, унта вăрман кашласа ӳсĕ... Чи хăрушши вара ял хуçалăх ĕçне тума пĕлекенсем юлманни пулĕ. Халĕ хулара кăна мар, ялта та ырашпа тулă е сĕлĕпе пăрса мĕнне пĕлмен ача нумай. Юрать çĕр улмине паллакалаççĕ-ха...

**Валерий МУРАВЬЕВ,**
**çыравçă.**

## КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ

**Хырăмлăх эрозийĕ** чухне ирсерен выç варла çуршар стакан чухлĕ чĕрĕ купăста сĕткенĕ ĕçмелле. Кашнинчех çĕнĕрен тунипе усă курмалла.

**Чир паллинчен хăтăлма**. Кăшт шăнсанах пит çине чир палли (герпес) тухать-и? Апла пĕр эрне таран пилеш курăкĕн 6-8 чечекне чăмласа шывпа çăтăр. Унтан вунă кунччен ирлĕ-касăлă апат умĕн кăштах вĕтетнĕ эрĕм чăмлăр.

**Типĕ ӳслĕкрен.** Бронхитпа чирлесе ирттернĕ хыççăн юлнă типĕ ӳслĕкрен çапла хăтăлма май пур: 1 стакан вĕри шыва вилкăпа нимĕрленĕ икĕ банан ярса лайăх пăтратмалла, 1 чей кашăкĕ пыл хушмалла. Банан хутăшне кун тăршшĕнче 1-2 кашăкăн çисе ямалла. Кăкăрта ыратни хăвăртрах иртĕ.

**Пĕвер канăçсăрлантарсан.** Кăвак сухана (1 кг) аш арманĕпе авăртмалла, 900 г сахăрпа хутăштарса 1,5 эрнелĕхе тĕттĕм те сулхăн вырăна лартмалла. Унтан сĕткенне лайăх пăчăртаса кăлармалла. Кунне 3 хут, апат умĕн çур сехет маларах, пĕрер кашăк ĕçмелле.

Çак рецептпа сипленсе курнисем унăн уссине чăнласах та туйнине пĕлтереççĕ.

**Карланкă шыççан.** Пусма таткине шывпа йĕпетсе пăрмалла, унтан кĕпейĕм çăвакан супăньпе сĕрсе мăя çыхмалла. Çаплипех çĕр касмалла. Ирпе мăя çуса кремпа сĕрмелле. Пан улми уксусĕпе сĕрни те пулăшĕ: 1 стакан ăшă шывра 1-2 кашăк уксус ирĕлтермелле.

## КĔСКЕН

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2013 çулхи IV кварталта пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçене çирĕплетнĕ. 6049 тенкĕпе танлашнă вăл (III кварталтинчен 127 тенкĕ сахалрах, çакă апатçимĕç таварĕ шутне кĕмен япаласемпе пулăшу ĕçĕсен хакĕ кăшт чакнипе çыхăннă). Çапла майпа иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталта ĕçлеме пултаракан вăй питти çынна пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе 6430 тенкĕпе танлашнă, пенсионерсен – 4963, ачасен – 6011 тенкĕпе.

Иртнĕ çул республикăри васкавлă медицина пулăшăвĕ паракан больницăсене çул-йĕр çинчи аварие пула шар курнă 1247 çынна (2012 çулта – 1225) илсе пынă, вĕсенчен 210-шĕ М7 федераци çулĕ çинче сусăрланнă.

## ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

### Куçпа аптрасан

**? Куç чирĕпе асапланакан çынсене ĕçлеме пултарайманнисен шутне кĕртеç-çĕ-и? Вăл е ку ушкăна палăртнă чухне мĕне шута илеççĕ?**

**Николай СИДОРОВ. Шупашкар районĕ, Вăрманкас Тăрăн.**

Хисеплĕ Николай Сидорович, сирĕн ыйтăвăра ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствине ярса патăмăр çакăн пек хурав илтĕмĕр:

«Раççей Федерацийĕнчи инвалидсене социаллă хӳтлĕхе илесси çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн (ăна 1995 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче 181-мĕш номерпе йышăннă) чирленипе, аманнипе, вăл е ку кăлтăка пула сывлăхĕ палăрмаллах пăсăлнипе, пурнăçĕ хĕсĕнсе çитнипе социаллă хӳтлĕх кирлĕ çынна инвалид статусне параççĕ. Пурнăçĕ хĕсĕнсе çитнĕ тени вăл – çын хăйне хăй пăхайманни, утайманни, ăнкарăвне çухатни, калаçма пултарайманни, хăйне хăй тытайманни тата ĕçлеме пултарайманни.

Куç чирĕпе миçемĕш ушкăн инвалидне тивĕçессе вара Чăваш Республикинчи медицинăпа социаллă экспертизăн тĕп бюровĕ татса парать».

**РЕДАКЦИРЕН.** Паллах, вулаканшăн ку хурав çителĕксĕр, çавăнпа хамăр енчен çакна пĕлтеретпĕр. Медицинăпа социаллă экспертиза куç курманнипе нушаланакан, ют çын пулăшăвĕсĕр нимĕн те тума пултарайманнисене çеç пĕрремĕш ушкăн инвалиĉĕ тесе йышăнать. Чылай чухне кунта икĕ куçĕ те пач курманнисем кĕреççĕ. Иккĕмĕш ушкăна пĕртен пĕр куçĕпе е иккĕшĕпе те питĕ япăх куракан, унчченхи пек ĕçлесе пурăнайман, ют çын пулăшăвĕ е ятарлă условисем кирлĕ çынна параççĕ. Виççĕмĕш ушкăна япăх куракансене, куç вăйĕ чакса пынипе куçлăхне е линзине тăтăшах улăштарса тăма тивекенсене, ятарлă пулăшу хатĕрĕсемсĕр ĕçлейменнисене параççĕ.

Вăл е ку ушкăна палăртнă чух кашни саманта шута илеççĕ: мĕнле профессипе ĕçленинчен пуçласа миçе çула çитни таранах.

### Тухтăрсене итлемелле

**? Сăмса хăвăлĕнче киста пур. Тухтăрсем операци тумалла теççĕ. Халăх мелĕпе сипленме пулмасть-ши?**

**Çывăрма выртсан сĕлеке юхма пуçлать. Мĕншĕн юхнине тата мĕнле сипленмелли пĕлесчĕ. Çавăн пекех алă чĕтренме пуçларĕ. Паркинсон чирĕнчен килте сипленме май пур-ши?**

**Май пулсан хуравласамăр, тархасшăн. Сывлăхпа çӳрĕр.**

**О. ИВАНОВА. Елчĕк районĕ, Елчĕк ялĕ.**

Кистана хирурги мелĕпе кăна сиплеççĕ. Халăхăн 10 проценчĕн сăмса хăвăлĕнче киста пурри паллă. Тăтăшах сунаспа, гайморитпа, шăл чирĕпе аптракансен тĕл пулать вăл. Ун пек çынсен час-часах пуç ыратать, вĕсем хăвăрт ывăнаççĕ, ыйхи вĕçет, ас тăвăмĕ чакать.

Сăмса хăвăлĕнчи кистаран операци туса хăтăлаççĕ. Пациентсем çакна çăмăллăнах чăтса ирттереççĕ. Больницăра пĕр эрне пек çеç выртаççĕ.

Сывлав çулĕсем чирлесен, сунаспа аптрасан çын çăварпа сывлать, çавна май çывăрнă вăхăтра сĕлеке тухать. Сĕлеке юхни тĕн нерв тытăмĕн ĕçĕ пăсăлнипе те çыхăнма пултарнă. Сирĕн, ахăртнех, çакă сăмсари кистана пула сывлама йывăррипе çыхăннă. Хăяккăн выртиччен çурăм çинче çывăрма тăрăшăр.

Паркинсон чирĕпе чирлекенсен тухтăрпа канашламасăр нимĕнле эмел те ĕçме юрамасть. Чире кăшт çăмăллатма халăхра анлă сарăлнă меслете çеç сĕнме пултаратпăр. Çур михĕ сĕлĕ хатĕрлемелле. Сахалтан та çур çул сипленмелле. Кунсерен 3 л шыва 3 кашăк сĕлĕ ярса йăваш çулăм çинче сехете яхăн пĕçермелле. Сĕлĕ шывне сăрăхтарса илсе кун тăршшĕнче ĕçсе ямалла. Термосра упрама юрамасть – хăвăрт йӳçет. Сăмах май, сĕлĕ шывĕ сывлав çулĕсен, нерв тытăмĕн, чĕре, пӳре, пĕвер, хырăмлăхпа пыршăлăх тракчĕн, сахăр диабечĕн, сыпă чирĕсенчен сывална пулăшать. Ытларах утса çӳремелле. Сĕт-турăхпа ӳсен-тăран çимĕçĕ çимелле. Лимон, ыхра, хура хурлăхан, помидор усăллă. Ашкакай, çăмарта сарри, салă, тăвар сахалтарах çимелле. Сывлăхлă пулăр!



### Пĕлсе усă курмалла

**? Хисеплĕ редакци! «Хресчен сасси - Кил» хаçата юратса вулатăп. Пурнăçра кирлĕ сĕнӳ-канаш нумай çырса кăларатăр. Тавах.**

**Эпĕ 30 çул ытла ĕнтĕ бронхитран пылпа алоэ курăкне вĕретсе ĕçсе пурăнтăм. Нумаях пулмасть телевизорпа пыла ăшăтсан наркăмăш пулать тесе каларĕç. Апла эпĕ ку таранччен наркăмăш ĕçсе пурăннă пулса тухать-и-ха? Малашне мĕнле сипленмелле-ши?**

**Л. СЕМЕНОВ.**
**Красноармейски районĕ, Йӳçкасси ялĕ.**

Пыла 40 градусран ытларах ăшăтсан пахалăхĕ чакать, вăл глюкозăпа фруктоза сиропĕ пек çеç тăрса юлать тесе шухăшлаççĕ. Бактерисене пĕтерекен пахалăхĕпе тутлă шăрши те çухалать. Ăшăтнă пылăн тĕсĕ те улшăнать, вăл кăштах тĕксĕмленет, тепĕр чух хăмăрланать те. Мĕн чухлĕ ытларах ăшăтатăн, пахалăхĕ çавăн чухлĕ ытларах чакать. Çавăнпа пыла ахаль çиме хушаççĕ.

45 градусран ытларах ăшăтсан пыл ферменчĕсем арканаççĕ пулсан, 60-80 градуспа – канцерогенланать (сиенлĕ япаласем кăларать), çавăнпа ăна вĕри шыва яма хушмаççĕ.

Вĕлле хурчĕ тытакансем ирпе пĕр кашăк пыл хыпса ăна çăварта «кустарма» сĕнеççĕ. Çакă пыла кашăкĕ-кашăкĕпе çининчен е шĕвеке хушса ĕçнинчен усăллăраххине ĕнентереççĕ.

Халăхра бронхитран çак мелсемпе сипленесси сарăлнă.

**Паланпа, пылпа**. 1 стакан палан çырли, 3 кашăк пыл, 1 л шыв илмелле. Палана нимĕрлесе вĕри шыва ямалла, 10 минута яхăн вĕретмелле, сăрăхтармалла. Сивĕнсен пылпа пĕрле ĕçмелле.

**Çĕр улми компресĕ.** Хуппипе пĕрле 4-5 çĕр улми пĕçермелле. Кăкăр е çурăм çине темиçе хут листи хумалла, ун çине – çурмалла caснă çĕр улми. Çиелтен утиялпа витмелле. Çĕр улми сивĕннĕçемĕн хутне туртса кăлармалла. Компреса каçпа тусан аванрах.

**Алоэ сĕткенĕпе, хур çăвĕпе.** 15 г алоэ сĕткенĕ, 100 г сысна е хур çăвĕ, 100 г услам çу, 100 г пыл, 50 г какао (çук пулсан та темех мар, тутă кĕртме çук кирлĕ вăл) хутăштармалла. Кунне 2 хут, пĕр стакан вĕри сĕтпе 1 кашăк чухлĕ сыпмалла.

### Çăвартан лайăх мар шăршă кĕрсен

*Лайăх мар шăршăран хăпма пан улми, кишĕр, укроп тавраш пулăшĕ. Ирхине сĕлĕ пăтти çини усăллă, вăл сĕлеке тухма пулăшнипе пĕрлех хырăмлăхпа пыршăлăха сиплет. Шăл тунине açтăрхан мăйăрĕпе сăтăрни аван.*

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**14. Станки** для валяния валенок. Т.: 89278617589, 89373810585.

**15. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**19. Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 8-903-322-57-66.

**20. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

**22. ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**24. Грабли, косилки, сажалки,** копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф. Доставка. Т. 89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дешево. Т. 89373866629.

**43. Натяжные потолки** за 1 день от 350 руб. Т. 89373972442.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

## КĔСКЕН

**Чăваш кĕнеке издательстви «Чăваш литературин антологийĕ. Поэзи» ятпа çĕнĕ кĕнеке кăларнă. Чăваш поэзине тарăн та тĕрлĕ енлĕ уçса паракан кăларăм ку. Авалхи чул палăк çырăвĕсенчен пуçласа 19-мĕш ĕмĕрте çырнă хайлавсемпе сăвăсем таранах вуласа пĕлме пулать.**

**Ленинград блокади – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин чи тискер те хăрушă тапхăрĕ. Хула 900 кун калама çук йывăр условисенче пурăннă. Наци библиотекин тăватă аслăлăхĕсен пайĕнче Ленинграда нимĕç фашисчĕсен блокадинчен ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнине халалланă кĕнекепе иллюстрации куравĕ уçăлнă.**

## СĔТЕЛĔ ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Ансат та тутлă

**Çур стакан сахăр, пĕрер стакан кĕвелĕкпе варени, 2 çăмарта, 200 г хăйма, тăварпа апат соди, 2 стакан çăнăх, тип çу.**

Кĕвелĕк çине апат соди, тăвар, сахăр, варени, çăмарта, хăйма ярса лайăх пăтратмалла. Унтан çăра хăйма пек пуличчен çăнăх хушмалла. Çакăн хыççăн чустана тип çу сĕрнĕ çатмана хурса якатмалла, 180 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартмалла. 30-40 минутран чейпе сăйланмалли хăйне евĕр пĕремĕк пулĕ.

### Тăпăрчă çăмахĕ

**500 г тăпăрчă, 1 çăмарта, 2 кашăк çăнăх, хăйма, тăвар.**

1. Тăпăрча çăнăхпа, çăмартапа хутăштарса тăвар калаттармалла.

2. Пысăкăх мар çаврашкасем туса çăнăхпа йăвалamalла, унтан вĕреме кĕнĕ шыва ярса çиеле ишсе тухиччен тытмалла.

3. Çакăн хыççăн тăпăрчă çăмахне шывран кăларса çатмана хумалла. Çиелтен хăймапа сĕрмелле, 200 градус таран хĕртнĕ духовкăра 15 минута яхăн пĕçермелле.

### Шывпа пĕçернĕ пулă

Скумбри пулла (2) тасатса пысăках мар татăксем туса касмалла, унтан ăна вĕреме кĕнĕ çур литр шыва ямалла, 1 кашăк тăвар, 2 кашăк сахăр, темиçе пĕрчĕ хура пăрăç, 2 пĕрчĕ гвоздика тата лавр çулçи хушмалла. Йăваш çулăм çинче 10 минута яхăн пĕçермелле. Çав тери тутлă пулĕ!

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Чечек акрăм та...

**? Иртнĕ çул чечек калчине хам çитĕнтерес терĕм. Ятарласа лавккаран çĕр туянтăм. Вăрлăх сапнă ещĕке чўрече ани çине лартрăм. Хăшĕ-пĕри пач та шăтмарĕ, теприсем пирвайхи çулçи тухсанах шанса ларчĕç, виççĕмĕшĕсен туни çинçелсе хуралчĕ. Çутă çитмерĕ-ши вара?**

Çутă çитменни мар кунта. Ахăртнех, чечек калчине хура туна (черная ножка) текен чир ернĕ. Чылай чухне чир тăпра урлă ерет. Лавккаран туяннинчен те. Чир ересрен вăрлăх акнă хыççăн тăпрана «Здоровая земля» препаратпа (1 л шыва 2 мл) сапмалла. Çапла туни хура тунаран кăна мар, ризоктониозран та, питиозран та, çĕресрен те, шанасран та упрать.

## ЧИПЕРЛЕНЕР-И?

**Ал айĕнчи хатĕрсем хаклă йышши косметикăран пĕрре те кая мар.**

Калăпăр, **пăр катăкĕ** сăн-пите уçăлтарать, унăн пиçĕлĕхне упрать.

Пит тĕсне лайăхлатма 1/3 стакан чухлĕ **çăра чей** тумалла, сивĕтмелле, лăканă **çăмарта шуррипе** хутăштарса 10 минутлăха пите сĕрмелле, кайран ăшă шывпа çуса ямалла.

**Вĕтĕ тăвар** ўте çемçетет. Сарлака савăтри ăшă шыва çур стакан тăвар ямалла. Урана унта 5-10 минут тытмалла, кайран таса шывпа çуса типĕтмелле.

**Шултра тăвара** нўрлĕ губкăпа пуçса ура тĕпне лайăх сăтăрмалла, унтан шывпа çуса типĕтмелле, кремпа сĕрмелле. Çурканланчăксен йĕрĕ те юлмĕ.

**Çĕпре** пит çинчи шатрашкасене пĕтерме пулăшать. 1 кашăк чухлĕ çĕпрене ăшă сĕтпе хутăштарса (çăрма хăйма пек пуличчен) пите сĕрмелле. Типсе çитсен ăшă шывпа çуса ямалла.

Куç айĕнчи тĕксĕм çаврашкасене пĕтерме 2 **тимĕр кашăк** пулăшĕ: вĕсене темиçе сехетлĕхе шăнтмăша (морозильника) хумалла, пĕр минутлăха куç айне тытмалла.

**Сухан хуппин шывĕ** пуçри лĕкĕрен аван: 1 л шыва пĕр ывăç сухан хуппи ярса 20 минут вĕретмелле, сăрăхтармалла. Пуçа шампуньпе çунă хыççăн хайхи шĕвекпе чўхемелле.



**«Кил», «Сывлăх», «Тĕпел» кăларăмсене Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## КИЛ-ТĔРĔШРЕ



### Тĕсĕ ан кайтăр

Янкăр кăвак тата хĕрлĕ тĕслĕ япаласем тĕсне ан çухатчăр тесен вĕсене чўхенĕ чух шыва кăштах апат соди хушмалла.

Япалана çăвиччен лимон турамĕ ярса лартнă шывра шўтерсен вăл шап-шурă пулĕ.

Ку вăл лаванда çăвĕпе йĕпетнĕ пусма татки, ыхра шăлĕ, лимон хуппи пулма пултарать. Вĕсем апат-çимĕçе тапăнакан кĕвене хăратаççĕ. Тумтире çиекен кĕвесене пĕтерекен хатĕр-хĕтĕре вара хума кирлĕ мар. Пур пĕрех пулăшаймĕ.

### Лимон сĕткенĕпе

Нўрĕке пула ваннăри плиткăсен хушши хуралса хитре марланать. Ăна шуратма йывăрах та мар. 1,5 л шыва çур стакан апат соди, 70 мл лимон сĕткенĕ, 1/4 стакан уксус хушса пăтратмалла. Çĕвĕ вырăнĕсене хайхи хутăшпа сĕрмелле. Ванна пўлĕмĕ таса пулĕ.

### Ан çыпăçтăр

Çунă япаласене хĕлле уçă çĕре çаксан вĕсем кантра çумне çыпăçса ларма пултараççĕ. Çапла ан пултăр тесен кантрана тăварлă ăшă шывпа сăтăрса илмелле.

### Кĕве ерсен

Кĕрпе-çăнăх тавраşне кĕве ерсен тĕпелти мĕн пур шкапа ухтарса йĕрке туma тивĕ. Кĕве сĕлĕ хăрпăкне те, техĕмлĕх кĕртекен çимĕçсене те, мăйăрпа макарона та çиет. Урăхла каласан, пур çĕре те хăйĕн çăмартине хăварма пултарать. Пушатнă шкапсене уксус шывĕпе çумалла. Уйрăмах кĕтессене лайăх тасатмалла: чăн-чăн йăви çавăнта мар-и? Кайран шкап çўлĕкĕсем çине вайлă шăршăллă япала хумалла.

### Тĕклĕ курткăна тасатма

Крахмала тăварпа (1:1) хутăштармалла, кăшт шыв хушса хăйма пек пуличчен пăтратмалла. Унтан ăна ваткăпа пуçса вараланнă вырăнсене сĕрмелле, типиччен кĕтмелле. Кайран хайхине таса губкăпа шăлса тасатмалла, йĕрсем юласран курткăна савăтсапа çумалли хатĕр тумлатнă шывпа сăтăрмалла.

### Горчицăпа çăвар

Çу лекнĕ çăм е пурçăн япаласене горчица шывĕпе çума юрать. Кун пек чухне япала тĕсĕ те каймасть, пĕчĕкленсе те лармасть.

Типĕ горчицăна (1 стакан) шывпа хутăштармалла (шĕвĕ чуста пек пултăр). Унтан ăна марля витĕр сăтăрса 40-45 градус таран ăшăтнă 10 л шыва ямалла, 2-3 сехет тăрăлтарса лартмалла. Супăньсĕр-порошоксăр çумалла. Горчица шывне 2-3 хут улăштармалла. Нашатырь спирчĕ хушнă шывра (10 л пуçне 1 чей кашăкĕ) чўхемелле. Пурçăн япалана апат-çимĕç уксусĕ хушнă сивĕ шывра (10 л шыва 5 кашăк) чўхемелле.

### Супăнь пулсан



Тĕпелте тĕпĕртетнĕ хушăра тем те пулать. Ал-урана пĕçертсе ярасси те. Хĕрелсе тăракан, анчах хăмпă тухман ўте асаннесен меслечĕпе сиплеме май пур. Пĕçертсе илнĕ вырăна тўрех юхса тăракан сивĕ шыв айне тытмалла. Супăнь татăкне (хуçалăх супăнĕ) пăтă пек çемçеличчен шывра шўтерсе ыратакан вырăна сĕрмелле. Темиçе кунтан инкек йĕрĕ те юлмĕ.


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### ПРОДАЮ

**47. Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 8-903-389-90-38, 48-92-77.

**48. ОКНА** пластиковые, **ДВЕРИ** стальные. Заводское производство. Гарантия 5 лет. Рассрочка. Дешево. Т. 89276689303.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53.Отруби, зерно, к/корм**. Д-ка. Т. 89613412236.

**56. Корпусную МЕБЕЛЬ** собственного производства. Т. 68-40-22.

**59. Кормовую свеклу** «ЛАДА» высокой репродукции. Тел.: 8(8352) 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60. Новинки от КЛОПОВ, МУРАВЬЕВ и ТАРАКАНОВ.** Тел.: 8(8352) 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**64. Комнаты** в общежитии в г. Чеб-ры, пр. Тракторостроителей, д.7: **13,4 кв. м** – 750000 руб., **17,3 кв. м** – 850000 руб. Т. 89875754430.

**66. Заборы кованые.** Т. 389587.

### СУТАТĂП

**40. Ăратлă сурăхсем.** Пырсах паратпăр. Шупашкар. Тел. 8-927-999-62-56.

### КУПЛЮ

**57. Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

### ĔÇЕ ИЛЕТПĔР

**41.** Ял ĕçне пĕлекен вĕреннĕ çынсене, çемьесене **ĕçлеме, пурăнма чĕнетпĕр**: 30 ĕне, сурăхсем, лашасем, 3 пони пур. Кашнинех кил-çурт. Шалу вăхăтра тўлетпĕр. Тури Кăмаша, тел. 8-927-998-82-27.

### УСЛУГИ

**18. Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

**25. Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот (распашные, откатные, автоматика). Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**63. Известный** Чебоксарский **экстрасенс**, маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает любые жизненные проблемы. Т. 89674743783.


## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30,11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.30-10.00, 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+)10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.30-12.00, 21.30-22.00 Ўнер тўпинчи вĕçев. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 20.30-21.00 Библи калавĕсем. (12+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.30-23.00 Кăвак хуппи. (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10,10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 – Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)

**Ытлари кун, кăрлач уйăхĕн 28-мĕшĕ**

